

●Галина Соловьева

# Госпитальте те литература каçĕсем йĕркеленĕ

*Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче фронтра хаяр çапăçусем пынă пулин те тăшман çук çĕрте халăх спектакле, концерта, музея, вулавăша çӳренĕ. Кĕнеке йывăр вăхăтра çынсене тӳсĕмлĕх, хăюлăх панă, чун хавалне çирĕплетме пулăшнă. 1941-1945 çулсенче пичет кăларăмĕсене вулакан йышланнă. Çĕршыври юлашки хыпарсемпе паллашма чылайăшĕ вулавăша килнĕ. Шупашкарта вăл вăхăтра Чăваш Республикин М.Горький ячĕллĕ библиотеки ĕçленĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ мĕн пур халăхăнни пекех фронта пулăшассипе, тăшмана часрах аркатса тăкассипе çыхăннă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи вулавăш ĕçĕ-хĕлĕ пирки ЧР наци библиотеки наци литературипе библиографи пайĕн пуçлăхĕпе Галина Соловьевăпа тĕл пулса калаçрăмăр.*

## Кĕнеке йăтса – цеха

«Вăрçă вăхăтĕнчи Шупашкарти вулавăшсен пурнăçне чылай ăсчах тĕпченĕ. Вĕсен йышĕнче Тихон Сергеев, Галина Алжейкина, Екатерина Иванова тата ыттисем те. Тертлĕ вăхăтра халăх ытларах çарпа патриотизм темисене хускатнă произведенисене вуланă. Библиотека ĕçченĕсем кĕнеке йăтса вулакан патне цеха, ток çине, çар комиссариатне, агитпункта, автостанцие тата ытти çĕре çитнĕ. Вăрçă пуçланичченех, 1938 çулта, Чăваш Республикин библиотекине М.Горький ятне панă. Унăн çурчĕ Чăваш ураммĕнчи 6-мĕш çуртра вырнаçнă. Вăл икĕ хутлă пулнă. Унта 3 вулав залĕ, Ленин пӳлĕмĕ, лекцисем ирттерме уйрăм аудитори уйăрнă. 1941 çулхи кĕркунне библиотекăн иккĕмĕш хутĕнче партин Шупашкар горкомĕн агитпункчĕ вырнаçтарнă. Вулав залĕ валли пĕр пӳлĕм кăна хăварнă. Кĕнеке çӳлĕкĕсем питĕ çывăх вырнаçнă. Куравсемпе лекцисем, калаçусем йĕркелеме пӳлĕмсем çитмен. Çавна май чылай вулаканăн коридорта вырăн тупма тивнĕ», – ăсчахсен статйисем çине тайăнса калаçрĕ Галина Павловна.

Вăрçă вăхăтĕнче патшалăх пулăшăвĕ чакнă, кĕнеке фончĕ питĕ вăрах пуянланнă. 1941 çулта вулавăшсем валли – 9928, 1942 çулта – 4427, 1943 çулта – 5216, 1944 çулта 6026 экземпляр туяннă. 1942 çулта 60 тĕрлĕ журнал, 24 хаçат çырăнса илнĕ. Тепĕр çул журналсен хисепĕ 108-а, хаçатсен 39-а çитнĕ. 1944 çулта библиотека фондĕнче 80345 кĕнеке пулнă.

## Вулавăша вутă хутса ăшăтнă

Библиотека ĕçĕ-хĕлĕнче чи çивĕч ыйтусенчен пĕри – квалификациллĕ кадрсем çитменни. «Вăрçă пынă вăхăтра библиотекăна тĕрлĕ çулта Августа Сергеевăпа Ольга Григорьева директорсем ертсе пынă. 1943 çулта унта ĕçлекенсем 10 çын çеç тăрса юлнă. Вĕсенчен чылайăшĕ сусăр пулнă. Тĕп ĕçсĕр пуçне вулавăш ĕçченĕсен кăмака хутмашкăн вутă çурса хатĕрлемелле пулнă. Библиографи ĕçне кашни кун пурнăçласа пыма вăхăт çитмен. Ăна 1943 çулта пуш уйăхĕнче Грудзинская библиограф пуçарса янă. Унта «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи» уйрăм та пулнă. Хастар библиотекарьсен хушшинче Евгения Егорова-Исаковăна, Анна Петровăна, Нина Богдановăна, Мария Никифоровăна, Феврония Ефимовăна палăртса хăвармалла. ЧР патшалăх архивĕнче вĕсем пурте 1946 çулта ӳкерĕннĕ сăн ӳкерчĕк те сыхланса юлнă», – каласа кăтартрĕ Галина Соловьева.

Библиотекăри вулав залĕ 9 сехетрен пуçласа 22 сехетчен ĕçленĕ. Кĕнекене вулакан патне çитерес тĕллевпе предприятисенче, колхозсемпе совхозсенче, госпитальсемпе çар чаçĕсенче, пристаньпе вокзалсенче, культура паркĕсенче филиалсем тата куçса çӳрекен библиотекăсем уçăлнă. Анна Петрова библиотекарь пуçарăвĕпе Шупашкарта вырнаçнă 6 эвакогоспитальпе 12 çар чаçне кулленех кирлĕ кĕнекесемпе тивĕçтернĕ. Çак ĕçе ятарлă расписание пăхăнса пурнăçланă. Вулавăш ĕçченĕсем кашни 12 кунран килсе тăнă. Тĕлпулура мĕн вуланине сӳтсе явнă, кĕнекесен куравне йĕркеленĕ, фотохаçатпа паллаштарнă. Н.К.Крупская ячĕллĕ хула паркĕнче вăрçăччен пекех çуллахи вулав залĕ ĕçленĕ. Уçă сывлăшра кĕнеке вулама кунне 50 çынран кая мар килнĕ.

**ШУПАШКАРТА ВЫРНАÇНĂ 6 ЭВАКОГОСПИТАЛЬПЕ 12 ÇАР ЧАÇНЕ КУЛЛЕНЕХ КИРЛĔ КĔНЕКЕСЕМПЕ ТИВĔÇТЕРНĔ**

## Хутла пĕлменнисемпе те ĕçленĕ

«1941-1945 çулсенче республика библиотекинчен çултаlăкне вăтамран 125-135 пин кĕнеке вулама илнĕ. Вулавăш ялтан хулари предприятисене ĕçлеме килнĕ çынсене производствăри специальноçсемпе паллаштарма пулăшнă. Çавна май кирлĕ литература тупса панă, калаçусем ирттернĕ. Хутла пĕлменнисемпе те ĕçлеме тивнĕ. Кунашкаллисем учетра 45-ĕн пулнă. Библиотекарьсем вĕсен ĕç вырăнне тăтăшах кĕнекесем йăтса килнĕ. Пĕтĕм йышпа пухăнса вулани те пулнă. Фронтри çапăçусем çинчен Информбюро сводкисене пурте кăсăклансах итленĕ», – палăртнă Тихон Сергеев хăйĕн кĕнекинче.

1943 çулта М.Горький ячĕллĕ вулавăш 48 курав ирттернĕ. Вĕсем Хĕрлĕ çар 25 çул тултарнине, Сталинграда ирĕке кăларнине, В.Маяковский çуралнăранпа 50 çул çитнине тата ытти пулăма халалланă. «Чăваш Ен – фронт валли», «Вăрçă вăхăтĕнчи чăваш литератури» куравсем кулленех ĕçленĕ. «Чăваш халăх ывăлĕсем – вăрçă паттăрĕсем» стенда хаçатра пичетленнĕ статьясенчен йĕркеленĕ. Ăна вулавăш ĕçченĕсем мĕн вăрçă пĕтиччен тытса пынă. Библиотекăна час-часах доклад тата политинформаци ирттермешкĕн кирлĕ литература шыраса çитнĕ. Çавăн пекех госпитальсенче Аркадий Первенцевăн «Испытание» романне тата Константин Симоновăн «Русские люди» пьесине те сӳтсе явнă. Вулавăшра çакна тума май килмен. Мĕншĕн тесен пӳлĕме 20 çынран ытла кĕреймен. Çавна май мероприятие урăх çĕрте йĕркелеме тивнĕ. Фронтран сусăр таврăннисене тимлĕх уйăрнă. Вĕсене кĕнекене пуринчен малтан е килнех леçсе панă.

Вăрçă кашни килех хура хыпар илсе килнĕ пулин те культура çыннисем халăха хавхалантарма тăрăшнă. Çавна май литературăпа музыка каçĕсем ирттернĕ. Вĕсенчен пĕри 1943 çулхи утă уйăхĕн 21-мĕшĕнче Чăваш патшалăх академи театрĕнче йĕркеленнĕ. Ăна Владимир Маяковский 50 çул тултарнине халалланă.



●Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче республика библиотекинче ĕçленĕ çынсем.

Кун çинчен Галина Алжейкина хăйĕн «Чăваш Республикин Горький ячĕллĕ библиотекинче тăрăшакансен Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ» статйинче çырса кăтартнă.

«Поэт-кĕрешӳçĕ, поэт-трибун, хăйĕн пултарулăхне çĕршыва сыхлассине халалланă Маяковский çинчен докладпа С.Иванов писатель тухса калаçнă. Ухсай, Шелепи, Поморский тата Белякова Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине халалланă хайсен сăввисене вуласа панă. Уяв концертпа вĕçленнĕ. Мĕн пур пухăннă укçана нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке тухнă вулавăш фондне куçарнă», – тесе çырнă «Красная Чувашия» хаçатра.

Вăрçă вăхăтĕнче библиотекарьсен ĕçĕ патриотизм туйăмне ӳстернĕ, совет халăхĕ тăшмана çĕнтерессе çирĕп ĕненме хистенĕ. Çакна Шупашкарти эвакогоспитальте сипленнĕ салтакăн çырăвĕ те çирĕплетет: «Эпир пире госпитальте çакнашкал тимлĕх уйăрнăшăн чунран тав тăватпăр. Кашни кунах лекцисем, докладсемпе информаци сехечĕсем ирттерни Совет Союзĕн политика пурнăçĕпе туллин паллашса тăма май пачĕ. Пире лайăх пăхни часрах сывалса çитсе Хĕрлĕ çар ретне таврăнса тăшмана пирĕн çĕр çинчен хăваласа яма хистет».

## Хĕллехи уйăхсенче çутăсăр ларнă

«1943 çулта библиотека ĕçне йĕркелесе пыма çав тери йывăрччĕ. Çакна унăн лаптăкне пĕчĕклетни тата çутта час-часах чарса хуни вулакансене пысăк чăрмав кӳретчĕ. Вулавăшăн иккĕмĕш хутне каялла тавăрас тесе обком пĕрремĕш секретарĕ патнех çырупа тухрăм. Çавах ыйтăва пирĕн майлă татса памарĕç. 3 вулав залĕнчен пĕри çеç тăрса юлни массăллă мероприятисене ирттерме май памастчĕ, куравсемпе агитаци стенчĕсене те вырнаçтарма май çукчĕ. Библиотекăра кĕнеке упрамалли вырăн сахал. Çӳлĕксем çывăх вырнаçнăран пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркине пăсма тиветчĕ.

Хĕллехи уйăхсенче çутă ялан çукчĕ. Çав вăхăтрах библиотека çывăхĕнчи харпăр çуртсенче вăл пурччĕ. Çавна пулах вулавăш производство планне тултараймастчĕ. Топливо енчен лару-тăру йĕркеллехчĕ. Вулавăша ăшăтса тăма вутă пурччĕ», – çырса пĕлтернĕ вăрçă вăхăтĕнче директорта ĕçленĕ Ольга Григорьева.

Библиотека коллективĕн пархатарлă тепĕр ĕçне те асăнса хăвармалла. Çĕршыври оккупацие лекнĕ территорисене ирĕке кăларма тытăнсан нимĕçсем аркатнă кĕнеке пуххисене пуçтарма тытăннă. Хаçатра çырса пĕлтернĕ тăрăх, Челябинск облаçĕнче пурăнакансем Воронеж тăрăхне – 70 пин ытла, Ленинград облаçне 600 пин ытла кĕнеке пухса ăсатнă. Чăваш Республикинчи библиотека ĕçченĕсем тăшманран шар курнă облаçсем валли 23916 кĕнеке тата 5 пин тенкĕ куçарнă. Çак пархатарлă ĕçе хутшăннине çĕршыв ертӳлĕхĕ пысăк хак панă. РСФСР Наркомпросĕ çумĕнче йĕркеленнĕ Чăваш Республикин библиотеки тата Патшалăх фончĕн литературин Шупашкарти филиалĕн директорĕсене Иосиф Сталин аслă командующи ятĕнчен тав телеграмми килнĕ.

«Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче вулавăшра ĕçленĕ библиотекарьсем пурнăçран уйрăлнă ĕнтĕ. Çапах вĕсем те Çĕнтерӳве çывхартма пулăшнă. Вулавăш çак йывăр тапхăрта халăхшăн массăллă агитаци тата культурăпа çут ĕç центрĕ пулса тăнă. Вăл çарпа патриотизм литературине пропагандăланă, Раççей тата Чăваш Ен паттăр хĕрĕсемпе ывăлĕсем çинчен куравсем йĕркеленĕ. Вăл вăхăтри библиографи ĕçĕ пĕтĕмпе çар темипе çыхăннă. Унта тăрăшакансем библиотека фондне вăрçă вăхăтĕнчи тĕллевсене пурнăçлама расхутланă, тылри тата фронтри паттăрла ĕçсем пирки пĕлтерсе тăнă, халăха Совинформбюро хыпарĕсемпе паллаштарнă. Чи пĕлтерĕшли: вулавăш вăрçă пуçланнă чухне хăйĕн 70 çулхи юбилейне паллă тунă пулин те вырăнти халăхшăн чĕрĕ пĕлӳ çăл куçĕ шутланнă», – калаçăва вĕçлерĕ ЧР наци библиотекин наци литературипе библиографи пайĕн пуçлăхĕ Галина Соловьева.

Проект ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать

Кăларăма Любовь ПЕТРОВĂПА пĕрле Ирина ПЛЕТКИНА, Надежда КЕДРОВА хатĕрленĕ